(cc) BY


***Брусова Галина Федоровна***
канд. пед. наук, доцент
ФГБОУ ВО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И.Я. Яковлева»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ОСОБЕННОСТИ ПРОВЕДЕНИЯ СЖАТОГО ОБУЧАЮЩЕГО ИЗЛОЖЕНИЯ

***Аннотация**: в статье рассматриваются особенности сжатого изложения обучающего характера и достаточно полно представлена методика его проведения. При проведении обучающих изложений реализуется основополагающий принцип подготовительной работы. Подготовительные упражнения, рассредоточенные во времени, дают возможность на самом уроке изложения сосредоточиться на главном – на осмыслении содержания, особенностей композиции, языка и стиля исходного текста.*

*Методика подготовительной работы к изложению определяется главным образом видом изложения. Сжатое изложение требует навыков отбора существенной информации и очень краткую передачу содержания текста; сохранение авторской последовательности событий; передача характера действующих лиц и обстановки без искажений; выделение основных микротем; обобщение содержания исходного текста.*

***Ключевые слова**: обобщение, краткость, основные мысли автора, микротемы исходного текста, количество абзацев, исключение подробностей, замена, слияния.*

***Аннотаци**. статьяра кĕске изложение вĕрентӳ формипе ирттерессипе çыхăннă уйрăмлăхсене туллин уçса панă. Вĕрентӳ изложенийĕ тĕрĕслев изложенийĕнчен хатĕрлев ĕçĕ пулнипе уйрăлса тăрать. Хатĕрлев тапхăрĕ вара ачасене текстпа хăйсене кирлĕ пек усă курма, текстăн содержанийĕпе, тытăмĕпе, стиль уйрăмлăхне шута илсе ĕçлес пултарулăха аталантарма майсем туса парать.*


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*Изложени çыракан урокра ачасене мĕнле хăнăху ĕçĕсем тытарасси чи малтан изложени тĕсĕпе çыхăннă. Кĕске изложенисем кирлĕ информацие суйласа илме, ăна кĕскен çырса кăтартма, автор кăтартнă пулăмсен, ĕç-пуçсен йĕркине сыхласа хăварма, геройсен кăмăл-туйăмĕпе шухăш-ĕмĕтне, тата вĕсен йĕри-таврашĕнчи лару-тăрăва улăштармасăр çырса кăтартма, микротемăсене тупса палăртма, содержанине пĕтĕмлетме пĕлессипе çыхăнать.*

***Тĕп сăмахсем:*** *кĕскен, пĕтĕмлетсе, авторăн тĕп шухăшĕсем, текстри микротемăсем, абзацсен шучĕ, тĕпĕ-йĕрĕпе çырса кăтартнă япаласене кăларса пăрахни, пĕр евĕрлĕ пулăмсене пĕтĕмлетни, улăштарни, пĕрлештерни.*

Кĕске изложенисен тĕп тĕллевĕ – текста кĕскен, пĕтĕмлетсе каласа пама вĕрентесси. Пĕр-пĕр япала е пулăм çинчен питĕ кĕскен калама пĕлни вĕренӳре пысăк вырăн йышăнать, вăл çынна кирлĕ ситуацисенче тĕрлĕ уйрăмлăха шута илсе калаçма май парать, ачасен пĕлĕвĕпе пултарулăхне йĕркелесе пыма пулăшать.

Методистсем кĕске изложенисен теорийĕпе практикине пăхса тухнă хыççăн çакăн пек ыйтусем кăларса тăратаççĕ:

1) май пур таран кĕскетесси;

2) кĕскетмелли мелсем;

3) кĕскетме май пур текста суйласа илесси;

4) изложенин ĕç йĕрки тата ăна пурнăçламалли майсем.

Кун йышши изложенисем валли текстсем тĕрлĕ çĕртен илме юрать: илемлĕ литературăран, публицистикăпа наука литературинчен т. ыт. те.

Кĕске изложени çыртарма юрăхлă текстсенчен ытларах калав-сăнлав формипе çырса кăтарнă материалсем вырăнлă. Кун йышши изложенисем çыртарас ĕçре çавăн пекех пысăк калăпăшлă, пĕр евĕрлĕ ĕçсем темиçе хут пулса иртекен текстсемпе те усă кураççĕ, ку ытларах халап-юмахсемпе çыхăнма пултарать. Енчен те текстра пĕр-пĕр ĕç е пулăм çинчен туллин е икĕ-виçĕ хутчен çырса кăтартнă пулсан, ачасем вара ун çинчен пĕр хутчен çеç çырса параççĕ, çак ĕç икĕ е виçĕ хутчен пулса иртнине тĕрлĕ мелсемпе усă курса (е тепĕр чух çак ĕçе тума çав тери йывăр пулнине) палăртса çеç хăвараççĕ. Хăш чухне пĕр-пĕр япала


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

çинчен темиçе хут каласа кăтартни те çĕнĕ шухăш илсе килет. Çавна пула текст содержанине улăштармасăр хăварас тесен вĕренекенĕн çак уйрăмлăхсене палăртас ĕçре урăхла мелсемпе усă курма тивет.

Кĕскен каласа пама пулăшакан тепĕр мел вăл – пĕтĕмлетӳ мелĕ: текстри хăш-пĕр уйрăм пайсем çинче тĕплĕ чарăнса тăмасăр, темиçе ăнлава пĕр тĕп шухăшпа пĕтĕмлетсе парасси.

Кĕске изложенисенче чи кирли – текстăн тĕп шухăшне тĕрĕс, улăштармасăр кĕскен каласа е çырса кăтартасси. Тĕп шухăша улăштарса ярасси ытларах чухне материала пĕтĕмлетсе çырса панă май пулма пултарать: вĕренекенсем тепĕр чух пĕр-пĕр кирлĕ пая сиктерсе хăварма е текстра çуккине кĕртсе лартма пултараççĕ. Çавăнпа та кĕске изложенисенче, материала пĕтĕмлетсе çырнă чухне, тĕп шухăша тĕрĕс курма вĕрентессипе учителĕн уйрăммăн ĕçлемелле.

Кун пек ĕççем тума пуçличчен малтан ятарлă хăнăху ĕçĕсем туса ирттермелле, ачасене текста кĕскетмелли мелсемпе паллаштармалла, кĕскетме хăнăхтармалла.

Кĕске изложенире малтанхи тексăн содержанине кĕскен те пĕтĕмлетсе каласа памалла, анчах та текста кĕскетнĕ май авторăн тĕп шухăшĕсене сыхласа хăвармалли çинчен çыраканăн яланах асра тытмалла. Çав вăхăтрах геройсен кăмăл-туйăмĕсене тата вĕсен пурнăçĕпе çыхăннă йĕри-таврашĕнче пулса иртекен ĕç-хĕлсене сăнласа паракан вырăнсемпе ĕçленĕ чухне те материалăн шухăшне улăштарса ярассинчен сыхланмалла.

Çакăн пек çитменлĕхсенчен, йăнăш тăвассинчен хăтăлас тĕллевпе малтанах текстран пĕчĕк микротемăсене уйăрса черновик çине çырса хумалла. Ун пек ĕçлени итленĕ текстăн планне тĕрĕс йĕркелеме май парать. Çакăн хыççăн тин тулли текста кĕскетесси çине куçмалла.

Материалпа ĕçленĕ май, текста кĕскетнĕ тапхăрта, малтанхи текстри пĕчĕк темăсем пурте кĕске изложенинче сыхланса юлччăр тесе ĕçлемелле, кăна пăхсах, сăнасах тăмалла. Кĕске изложени вара автор тексчĕпе танлаштарсан абзацсен шучĕ тĕлĕшĕнчен уйрăлса тăмалла, вăл урăхларах та пулма пултарать.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Текста кĕскетес ĕçре ытларах усă куракан, анлă сарăлнă мелсем шутĕнче çаксем пулма пултараççĕ:

1) тĕпĕ-йĕрĕпе каласа панă, тĕплĕн çырса кăтартнă вак-тĕвек япаласене, сăнласа çырса кăтарнă вырăнсемпе пулăмсене кăларса пăрахни;

2) пĕр евĕрлĕ пулăмсене пĕтĕмлетни;

3) кăларса *пăрахнипе пĕтĕмлетнине* майлаштарса çыхăнтарни.

Кăларса пăрахнă чух малтан чи кирлине, текстран тухса тăракан тĕп шухăшсене тата уйрăм пулăмсене тупса палăртмалла, унтан тĕпĕ-йĕрĕпе çырса кăтартнă вырăнсене кăларса пăрахмалла. Çакăн хыççăн кирлĕ материала пĕтĕмлетсе çĕнĕ текст йĕркелемелле.

Материала пĕтĕмлетнĕ чух уйрăм фактсене кăларса илеççĕ те вĕсене пĕтĕмĕшле каласа пама пулăшакан чĕлхен мелĕсемпе усă курса çĕнĕ текст йĕркелеççĕ. Текста кĕскетнĕ чух хăш мелпе усă курасси кашни текстран хăйĕнчен тата текст уйрăмлăхĕнчен те килет.

*Панă текстри шухăша кĕскен калама пулăшакан тĕп мелсен шутне çаксене кĕртеççĕ*:

*1. Улăштарни*:

– пĕр йышши членсене пĕтĕмлетӳ сăмахĕсемпе улăштарни;

– предложени пайĕсене синонимсемпе улăштарни;

– уйрăм предложенисене е вĕсен пайĕсене кăтарту местоименийĕсемпе улăштарни;

– уйрăм предложенисене е вĕсен пайĕсене паллă тата çуклăх местоименийĕсемпе пĕтĕмлетӳ тĕллевĕпе усă курса улăштарни;

– пăхăнуллă хутлă предложенисене хутсăр предложенисемпе улăштарни;

– тӳрĕ пуплевлĕ предложенисене тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисемпе улăштарни;

*2. Кăларса пăрахни*:

– предложенин уйрăм членĕсене, пĕр йышши членсенчен хăш-пĕрисене кăларса пăрахни;

– икĕ е темиçе хут калакан пулăмсене кăларса пăрахни;


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

– предложенири ытлашши пысăк пĕлтерĕше палăртман фрагментсене кăларса пăрахни;

– синонимсенчен пĕрне е ытларахăшне кăларса пăрахни;

– анлă та тĕплĕ сăнласа е ăсласа çырса кăтартнă предложенисене кăларса пăрахни.

3. *Пĕрлештерни*: пĕр-пĕр ĕç-пуç çинчен калакан икĕ хутсăр предложение пĕрлештерсе пĕр хутлă предложени туни.

Кĕске изложени çырнă чухне урока учитель пĕчĕк калаçуран пуçласа ярать, изложени тĕсне, унăн уйрăмлăхне уçса парать.

Вĕрентекенĕн калаçура кĕскен каласа е çырса пама пĕлни çынна пурнăçра питех те кирлĕ пулнине, çак пĕлӳпе час-час усă курма тивнине аса илтерсе хăвармалла. Тĕслĕхрен, пурнăçра пĕр-пĕр ачан маларах палăртнă темăпа доклад е диплом ĕçĕ çырса хатĕрлеме, ăна хӳтĕленĕ чух 5–8 минут хушшинче кĕскен каласа пама тивет. Çав вăхăтрах ачан хăйĕн наука ĕçĕнче мĕнле шухăшсене уçса панине, мĕн-мĕн тунине, мĕнле уйрăмлăхсене палăртнине, ку е вăл пулăм çинчен хăй мĕнле шутланине те кăтартса хăварма пултармалла [1, с. 19].

Кĕскен çырса кăтартнă материалсене хаçатсен малтанхи страницисенче те курма пулать, унта яланах çĕнĕ хыпарсем çинчен кĕскен çырса кăтартакан колонкăсем пулаççĕ. Урокра çакăн пек материалсене ачасемпе пĕрле пăхса тухни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кун пек тĕслĕхсене учителĕн ачасене пурнăçран татах та илсе кăтартмалла, вĕсен пĕлтерĕшĕсем çинче чарăнса тăмалла.

Ун хыççăн текста учитель вуласа парать. Вуласа тухнă хыççăн материала мĕнлерех кĕскетсен лайăхрах пулнине пĕлес тĕллевпе текста тишкереççĕ. Ачасем текстра темиçе хут пулса иртекен ĕçсемпе çыхăннă вырăнсене, сăнлав формипе уçса панă самантсене, е пĕтĕмĕшле ăнлантарнă шухăшсене шырася тупаççĕ.

Малтанхи вĕрентӳ урокĕсенче текста мĕнле кĕскетмеллине учитель хăй кăтартса парать: ачасемпе пĕрле уйрăм абзацсемпе ĕçлеççĕ, абзацри шухăша кĕскен мĕнле калама май пуррине вĕрентекен хăй кăтартса хăварать. Илнĕ ма-


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

териала тишкернӗ май ачасемпе пӗрле пӗтӗмлетӳ тӑваҫҫӗ, унтан вӗренекенсем тепӗр абзацпа хӑйсем тӗллӗн ӗҫлесе пӑхаҫҫӗ.

Ачасен малтанхи ӗҫӗсем: текстра темиҫе хут тӗл пулса иртекен е пӗр евӗрлӗ ӗҫсене шыраса тупса вулаҫҫӗ, кайран суйласа илнӗ материала каласа параҫҫӗ, кӗскетеҫҫӗ. Ытти материалпа малалла ӗҫлесси те (вуласа кӗскетесси) ҫак майпах пулса пырать.

Пӗтӗмлетӳ мелӗпе кӗскетнӗ чух текста уйрӑм пайсемпе вулаҫҫӗ. Кашни паях ачасен кӗскен каласа памалла. Малтан кашни пай тӑрӑх туллин те тӗплӗн, кайран кирлине ҫеҫ кӗскен калаттарни ачасене икӗ тӗрлӗ изложенин уйрӑмлӑхне лайӑхрах курма пулӑшать. Кунта ачасене телевизорпа паракан ҫӗнӗ хыпарсен «Вести» е «Новости» передачисене аса илтермелле, малтан ҫӗнӗ хыпарсем ҫинчен кӗскен, кайран туллин те анлӑн каласа, кӑтартса панине шута илсе ӗҫлеме сӗнмелле. Ӗҫе ҫав формӑпа туса пӑхма та юрать.

Текста пайсем тӑрӑх каласа пынӑ май ачасене малашнехи ӗҫре пулӑшас тӗллевпе тивӗҫлӗ кӑтартусене класс хӑми ҫине питӗ кӗскен ҫырса пама юрать [2].

Вӗрентӳ ӗҫӗ текста кӗскен каласа панипе вӗҫленет. Сӑмах вӗҫҫӗн каласа панӑ чухне тунӑ йӑнӑшсене, ҫитменлӗхсене палӑртнӑ хыҫҫӑн ачасем кӗске изложение ҫырма пуҫлаҫҫӗ. Учитель текста тепӗр хут вуласа памасть. Енчен те пӗлӳ тӗлӗшӗнчен япӑхрах класра учитель текста тепӗр хут (виҫҫӗмӗш хут) вуласа пама шутларӗ пулсан текста ачасене сӑмах вӗҫҫӗн калаттариччен вуласа памалла. Кӗске изложенисене ҫырма вӗрентмешкӗн ятарлӑ вӗрентӳ урокӗсем ирттерни лайӑх. Вӗсен йӗрки ҫакӑн пек пулмалла:

1. Урок тӗллевӗпе паллаштарни, умӗнхи калаҫу.
2. Изложени тӗсӗн уйрӑмлӑхӗ ҫинче чарӑнса тӑни.
3. Ачасене текстпа паллаштарни.
4. Палӑртнӑ изложени тӗсӗн уйрӑмлӑхне ачасене курма пулӑшни, текст ҫине таянса ӗҫлени:

1) темине уйӑрса илни, тӗп шухӑшне палӑртни;

2) текста вак темӑсем ҫине пайласа план туни;


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

3) кĕскетмелли вырăнсене палăртни;

4) планăн кашни пайĕпе ĕçлени, вак темăсенчи материала, тĕпĕ-йĕрĕпе каласа панă, тĕплĕн çырса кăтартнă вырăнсене кĕскетессипе, вак-тĕвек япаласене, сăнласа çырса кăтарнă вырăнсене кăларса пăрахассипе ĕçлени;

5) пĕр евĕрлĕ пулăмсене пĕтĕмлетессипе ĕçлени;

6) кăларса пăрахнипе пĕтĕмлетнине майлаштарса çыхăнтарни.

5. Текст чĕлхипе, ун тишкерĕвĕпе ĕçлени, урок умĕнхи ĕçсенче пăхса тухма ĕлкĕреймен орфограммăсемпе пунктограммăсене тишкерни.

6. Текста иккĕмĕш хут вуласа пани.

7. Текст содержанине вĕренекенсемпе пĕрле тепĕр хут пăхса тухни, содержание калаттарни.

8. Вĕренекенсем изложение харпăр хăй тĕллĕн çырни.

9. Çырнă ĕçе тӳрлетсе лайăхлатни, якатни.

Çыраканшăн е калаканшăн материала тĕрлĕ улшăнусем кĕртсе кĕскен те витĕмлĕ ăнлантарса пама пĕлни кулленхи калаçура та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕренекенсем хăйсен шухăшне кĕскен каласа пама йывăррăн хăнăхаççĕ, çавна кура кун йышши изложенисем çырма кашни класрах хăнăхтарса пымалла [1, с. 20].

Кĕске изложенисене çырма вĕрентнĕ чухне текст калăпăшĕпе класăн пĕлĕвне, хăнăхăвне кура пĕр е икĕ урок таран вăхăт илме юрать. Унсăр пуçне изложенисене тĕрĕсленĕ хыççăн çур урока яхăн тишкерӳ тума вăхăт кирлĕ. Тишкерӳ ирттернĕ чухне учителĕн чи малтан çак изложенире çеç тĕл пулакан çитменлĕхсем çинче чарăнса тăмалла – вĕсем текстăн содержанине кĕскен те витĕмлĕн каласа пама пулăшассипе çыхăннă мелсем.

Пурнăçра мĕн таран кĕскен каласа парасси çав вăхăтри лару-тăруран та килет: калама мĕн чухлĕ вăхăт пурринчен, çыру ĕçĕн калăпăшĕнчен.

Кĕске изложени çырма вĕрентнĕ чухне (пĕрремĕш ĕçсенчех мар пулин те) ачасен умне уйрăммăн кăларса тăратнă тĕллевсене пурнăçлама хăнăхтарни те питех те усăллă: ĕçе пĕр-пĕр палăртнă вăхăт хушшинче е пĕр-пĕр кăтартнă калăпăш чухлĕ çырасси.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ĕçе ача мĕн чухлĕ вăхăтра тата мĕнле калăпăшпа çырассине учителе вĕрентӳ ĕçĕнчи хăнăху кăтартса пама тивĕçлĕ.

Кĕске изложение тĕрĕслев ĕçĕ евĕр ирттернĕ чухне çыру ĕçĕн вăхăтне е унăн калăпăшне, е иккĕшне те харăс кăтартса хăварма юрать. Кĕске тĕрĕслев изложени валли ăна çырма тата тĕрĕсленĕ хыççăн тишкерӳ тума пурĕ урок çурă е икĕ урок кирлĕ.

*Кĕске изложени çырма пултарасси çакăн пек хăнăхусемпе çыхăнать*:

– кирлĕ материала суйласа илме пĕлесси, текстăн кĕске содержанине кĕскен каласа пама пултарасси авторăн тĕп шухăшне, унăн шухăш йĕрне çыхăнуллă, уйрăм геройсен характерне, кăмăл-туйăмĕпе шухăш-ĕмĕтне тата вĕсен йĕри-таврашĕнче пулса иртекен пулăмсене кĕске изложенинче урăхлатса ямасăр тĕрĕс ӳкерсе кăтартма пултарас хăнăхусем пурринчен килет;

– пĕчĕк темăсене тупса палăртма пултарас хăнăхупа;

– паракан текстăн содержанине пĕтĕмлетес пултарулăхпа;

– çыракан кĕске изложенипе ĕçленĕ чух автор стильне сыхласа хăварас тĕллеве тытса пымалла маррине, анчах та авторăн текстри тĕп сăмахĕсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе усă курмаллине ăнланнипе.

*Тĕсне кура кĕске изложени калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен пĕчĕккĕ пулма пултарать, анчах содержани тĕлĕшĕнчен чухăн пулма пултараймасть.*

*Кĕске изложени çакна тума пĕлнине тĕрĕслет*:

– текста содержани тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йышăнма пултарнине, текстри микротемăсене уйăрма, текста итлеме пĕлнине;

– кашни микротемăра тĕп тата пулăшу информациллĕ материал пулнине тĕпе хурса уйăрма пĕлнине;

– пулăшу информациллĕ материала текстран кăларса пăрахма, кĕскетме пĕлнине;

– палăртнă тĕп материала çыхăнуллă, шухăш йĕрне çухатмасăр кĕскен çырса кăтартма пĕлнине.

*Асра тытăр*!!!


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Кĕске изложени çырнă чух çыраканăн лексики панă текст лексикинчен уйрăлса тăма, урăхларах пулма та пултарать.

Кĕске изложенинче *абзацсен шучĕ паракан текстри* микротемăсен шучĕпе *килĕшсе тăмалла, йĕрки тĕлĕшĕнчен* те (мĕнле йĕркепе вырнаçнине кура) *çырма паракан текстпа тӳр килмелле*.

Çырма паракан текстри абзацсен шучĕ кĕске изложенинчи абзацсен шучĕпе тӳр килмессе те пултарать.

*Текстран çакна кăларса пăрахма юрамасть*:

– автор тезисне;

– тĕп шухăша çирĕплетес, ĕнентерес тĕллевпе усă курнă автор ăнлантарăвĕсене (аргуменчĕсене);

– автор пĕтĕмлетĕвне.

***Список литературы***

1. Брусова Г.Ф. Изложени тексчĕсен пуххи: V–IX классенче вĕрентекенсем валли. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. – 144 с.

2. Ивченков П.Ф. Обучающие изложения: V–IX классы: пособие для учителя. – М.: Просвещение, 1993. – 224 с.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)